Газета «Çĕнтерӳ çулĕ» t.me/putpobedy21 Путь победыОК Путь Победы

Мăн Турхан территори пайĕ

# ПАЯНХИ ЯЛ

#регпроекты #нацпроекты

**Мăн Турхан территори пайне 8 ял кĕрет – Иртеменкасси, Элмен Сунар, Етруккасси Мăрат, Чăрăшкас Мăрат, Кăмаш, Кушик, Мăн Турхан, Тĕмпек**

*Проект Вăрнар муниципаллă округĕ пулăшнипе пурнăçа кĕрет*

## Пурнăç малаллах пырать, ял тăрăхĕ те аталанать



Амăшĕн уявĕнче – пĕрлехи йышпа.

**Мĕнле пурăнать, епле сывлать паянхи чăваш ялĕ? Паллах, ырă енсем те чылай, ял-йыша шухăшлаттараканни те çук мар. Хаçат страницисенче тухакан «Паянхи ял» рубрикăна вулакансем кăмăлпах йышăнчĕç. Çак номерте Мăн Турхан территори пайĕн аталанăвĕ пирки çырса пĕлтеретпĕр.**



Мăн-турхансем – чăвашлăхшăн.

Ку тăрăхра сакăр ял – Иртеменкасси, Элмен Сунар, Етруккасси Мăрат, Чăрăшкас Мăрат, Кăмаш, Кушик, Мăн Турхан, Тĕмпек. Пĕтĕмпе 817 çын пурăнать. Килти хушма хуçалăха тытса пыракансем 395-ĕн.

Сывлăха ахальтен мар хаклă пуянлăхпа танлаштараççĕ. Ăна вăхăтра çирĕплетмесен кайран ылтăн-кĕмĕл темĕн чухлĕ кăларса хурсан та усси çук. Ку территори пайĕнче пурăнакансен сывлăхне Чăрăшкас Мăратри, Мăн Турханти, Иртеменкассинчи медпунктсенчи шур халатлă ĕçченсем пăхса-асăрхаса тăраççĕ. Поликлиника тухтăрĕсем те участоксене тухса çӳреççĕ. Палăртса хăвармалла, «Сывлăх сыхлавĕ» наци проектне пурнăçласа Чăрăшкас Мăратра 2018 çулта çĕнĕ медпункт çĕкленĕ.

Пурăнакан вырăнта суту-илӳ учрежденийĕсем пуррине мĕн çиттĕр? Çăкăр-тăвар та, ытти кирлĕ продукта та центра каймасăрах туянма пулать. Мăн Турхан территори пайĕнче 4 магазин ĕçлет. Пурте предпринимательсен.

Территори пайĕн мăнаçлăхĕ – ял хуçалăх организацийĕсем. «Знамя» кооператив, Вăрнарти аш-какай комбиначĕн Кăмашри хушма хуçалăхĕ аталану çулĕпе пыраççĕ.

Анлă уй-хирте çулленех паха культурăсем çитĕнеççĕ. Çĕршыв пӳлмисене тĕштырăпа тивĕçтерес енĕпе курăмлă ĕçлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ те аталанать. Яллă тăрăхра пурăнакансем валли вырăнтах ĕçлĕ пулма майсем пур.

«Знамя» кооперативăн тилхепине йывăрлăхра нихăçан та пуç усман, малаллах талпăнакан ертӳçĕ Вячеслав Иванович Васильев тытса пырать. Хуçалăхра мăйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх икçĕр пуçа яхăн, çав шутра ĕнесем – 80.

Паллах, Элмен Сунарти тăрăшуллă ĕçлекен Анжелика Валерьевна Дмитриева фермер пирки те ыррине каламалла. Унăн хуçалăхĕнче мăйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх 72 пуç, ĕнесем – 37 пуç.

Юлашки çулсенче пуçаруллă бюджет программине ĕçе кĕртме пуçланăранпа яллă тăрăхсен сăнсăпачĕ малтанхи пек мар, палăрмаллах улшăнчĕ. Мăн Турхан территори пайĕнче те ку программăпа ăнăçлă усă кураççĕ.

Масара пăхса тăрасси – кашни çыннăн сăваплă тивĕçĕ. Чăрăшкас Мăрат, Кăмаш, Мăн Турхан ялĕсенче масар çурчĕсене хăпартнă. Кăмашра сăваплă вырăн тавралла картана та çĕнетнĕ.

Пуçаруллă бюджет программипе усă курса Элмен Сунарта пĕвене тасатнă. Тĕмпекре Тĕп тата Набережная урамсенчи участоксене юсанă. Проектсене ĕçе кĕртме округ депутачĕ Владимир Яковлев та пулăшнă.

Чăрăшкас Мăратра та Кульцав урамĕнчи çула юсаса такăрлатнă. Планпа килĕшӳллĕн тепĕр çул ĕçсем тата малалла тăсăлмалла. Мăн Турханти Зеленая урамри çула та юсав кĕтет. Такăр çулсене сарнипе-юсанипе ял кассисем пылчăкран тасалсах пыраççĕ темелле. Паллах, тепĕр чухне çул-йĕр пахалăхĕ пирки тĕрлĕрен калаçнине илтме тӳр килет. Маларахри вăхăта аса илер-ха. Йĕпе-сапаллă çанталăкра çăмăл машинăсем лавкка, клуб е медпункт таран кăна кĕретчĕç. Халĕ вара кил-çурт умнех çитме пулать.

Территори пайĕн пуçлăхĕн Олег Валерьянович Григорьевăн ĕçĕ питĕ яваплă. Унăн тĕрлĕрен тĕрлĕ ыйтăва татса пама тивет. Вăл ял-йыш шанăçне тӳрре кăларма, хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçлама тăрăшать. Ял çыннисене хумхантаракан-пăшăрхантаракан кашни ыйту унăн тимлĕхĕнчен тухмасть.

– Пирĕн тĕллев – самана таппинчен юлмалла мар. Çынсем пурăнакан тăрăхсене хăтлăх кĕртесси тĕпре. Çавăнпа та республика, федераци программисене вăхăтра пурнăçлама тăрăшатпăр, – терĕ Олег Валерьянович.

Пуçлăха Алевтина Федорова тĕп специалист ĕç тĕллевĕсене пурнăçа кĕртме пулăшать, яваплăха туйса тăрăшать. Çарпа учет енĕпе тимлекен специалист Валентина Константинова пирки те ырă сăмахсем кăна каламалла.

Культура вучахне упрасан ял пурăнать. Территори пайĕн пултарулăх коллективĕ ял халăхне те концертсем кăтартса савăнтарать, округри мероприятисене те хутшăнать. Çурхи ĕçсем хыççăн, акă, Ĕçпе юрă тата спорт уявне – Акатуя – ирттереççĕ. Ку пĕлтерĕшлĕ мероприятирен те вырăнти артистсем пăрăнмаççĕ, куракансене хăйсен пултарулăхĕпе паллаштараççĕ. Тĕрлĕ конкурссенче те маттур. Кăçал мăн-турхансем «Чи лайăх блюдо» номинацире çĕнтернĕ. Конкурс валли сысна çури пĕçерсе-техĕмлесе хатĕрленĕ. Олег Валерьянович Акатуя хутшăнма пулăшнă ырă ертӳçĕсене те палăртса хăварчĕ. Вĕсем – Вăрнарти аш-какай комбиначĕн Кăмашри хушма хуçалăхĕн директорĕ Иван Федоров, «Знамя» ЯХПК председателĕ Вячеслав Васильев.

«Культура» наци проектне пурнăçласа пирĕн тăрăхра тĕрлĕ мероприятисем йĕркелеççĕ. Кăçал утă уйăхĕнче, ак, Элмен Сунарта «Манăçми аваллăх» ятпа республика шайĕнчи мероприяти – фольклор кунĕ – иртнĕ. Уявра Элĕк, Йĕпреç, Канаш, Комсомольски, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Шупашкар, Етĕрне тата Вăрнар округĕсенчи коллективсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă.

– Чăваш ене çĕр пин юрă çĕршывĕ тесе ахальтен каламаççĕ. Элмен Сунарта кăçал фольклор кунĕ чаплă пулчĕ. Уява Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Зинаида Козлова, Элмен Сунарта çуралса ӳснĕ ятлă-сумлă ентешĕмĕр Владимир Филиппов тата ытти хăнасем çитрĕç. Республикăри 11 фольклор коллективĕ уяв программине пуянлатрĕ. Куравсем, мастер-классем ĕçлерĕç. Мероприятие пин ытла çын килсе курчĕ. Уяв ӳссе пыракан ăрăва та, çитĕннисене те чăваш культурипе паллаштарчĕ. Пирĕн тăрăхра çакăн пек пысăк мероприяти иртнипе мăнаçланатпăр, – çирĕплетрĕ Олег Григорьев.

Мăн Турхан территори пайĕнче пуçаруллă çынсем сахал мар. Акă, пĕлтĕр кăмашсем хăйсен вăйĕпе ялти пĕвене тасатнă. Çăлне те чавнă. Мăн Турхан территори пайĕнче пурăнакансем субботниксене хастар хутшăнаççĕ, тăван тавралăхра тирпей-илем хуçалантăр тесе тимлеççĕ. Чăн та, тăван кĕтесе упрамасан килес ăрусем пирĕн пирки мĕн калĕç?

Территори пайĕн пуçлăхĕ Олег Григорьев палăртнă тăрăх, паянхи ял яшĕсемпе хĕрĕсен шанчăкĕ çирĕп пулмалла. Çамрăксенче – чăваш ялĕн малашлăхĕ-çке. Вĕсен ырă улшăнусене кура тăван енчех тĕпленме тăрăшмалла. Мăн Турхан территори пайĕнче ялсене аталантармалли программăсене пурнăçа кĕртессипе малалла та ăнăçлă ĕçлесе пыма палăртаççĕ.



Ăстасен аллинче ĕç вылять.



Мăн Турханти çĕнĕ çул.

**Елена ПОРФИРЬЕВА**